2014 • 23 №
ДЕКАБРЬ/РАШТАВ

ХЫПАР

# КАПКÀН

16+




С.Мягков ўкерчĕкĕ

# Усалтан тар, ырă патне пыр

Йĕпреç районĕнчи Чăваш Тимешри Иванов (хушаматне улăштарнă) 19 çулта кăна-ха, анчах хаяр шĕвекпе туслашма та ĕлкĕрнĕ. Ӳсĕр çыншăн вара тинĕс те чĕркуççи таран.

Кăçал çуллахи лăпкă каç хаяр шĕвек лĕрккенĕ хыççăн çамрăкăн катаччи чупас килнĕ. Анчах çăмăл машина çук.

– Хальхи вăхăтра машина тупасси йывăр-им? – хавхалантарнă вăл çул çитмен юлташĕсене.

Урамра ларакан çăмăл машинăна асăрхасан тӳрех ун патне çул тытнă. Алăкĕсене питĕрсе илни те чăрмантарман ăна. Кантăкне патакпа çапса çĕмĕрнĕ те кабинăна кĕнĕ. Шăв-шав тăвасран çамрăксем «хурçă ута» тапратмасăр айккинелле тĕксе кайнă. Анчах аслă çул çине илсе тухса лартни пулăшман – техника хуçисĕр вырăнтан та тапранман. Катаччи чупасси пулман пуçтахсен, ют пурлăха хапсăнни вара çăмăллăнах саваламан сак çине илсе çитернĕ. Йĕрке хуралçисем вĕсене ушкăнпа каварлашса транспорт хатĕрне вăрланăшăн айăплама ĕç пуçарнă. Ивановăн айăпĕ татах пысăкрах, ăна çул çитменнисене преступлени çулĕ çине тăратнăшăн та явап тыттарнă. Нумаях пулмасть район сучĕ Иванова 45 пин тенкĕлĕх штрафланă, ыттисене – 10-шар пин тенкĕ.

**Л. АЛА**




С. Мягков ӳкерчĕкĕ

**– Кунашкаллине активменччĕ-ха... Туянатпăр!**
– Такую мы еще не пили... Берем!


**КАПКĂН**
**Сатирăпа кулăш журналĕ**
**1925 çулхи пуш уйăхĕн 16-мĕшĕнче тухма пуçланă**
**23 (1623)№**
**декабрь/раштав**

Учредительсем – Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви, Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăйтытăмлă учрежденийĕ

**Директор-тĕп редактор – В.В. ТУРКАЙ**

Редактор – Н.П. Петров
Художник – С.Б.Мягков
Калăплавçă – Е.А.Трофимова

Журнала почта уйрăмĕсенче, «Чăвашпичет» тата «Советская Чувашия» киоскĕсенче, редакцире çулталăкĕпех çырăнтараççĕ

Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен тытăмĕнчи тĕрĕслев службин 2013 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00308 номерпе регистрациленĕ.

**Индекс – 24608**
Пичете алă пуснă: 3.12.2014
Пичетленĕ: 12.12.2014
Хут формачĕ 60х84/8
Усл.п.л. 1,5
Тираж 1426 экз.
Заказ К-2464
Ыйтмалли телефонсем: 56-09-31, 56-00-67, 62-50-06.
Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар хули, Иван Яковлев пр., 13.
факс: (8352) 62-50-06, 28-83-70
www.hypar.ru
e-mail: atal-volga@mail.ru

Журнала «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ.



Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, таварса памаççĕ. Журналăн юрăхсăр экземплярĕсем тĕл пулсан издательство типографине пĕлтермелле.
Кунти материалсене «Капкăнран» илнине асăнмасăр тепĕр хут усă курма юрамасть.

# Кермен вĕт ку!

Пурнăç тĕлли-паллисĕр ан ирттĕр тесен арçыннăн пӳрт тумалла, ывăл ӳстермелле, йывăç лартмалла. Савельев – (хушаматне улăштарнă) ăна-кăна хăвăрт тĕшмĕртекен çын. Пĕрремĕш тĕллеве пурнăçлассишĕн нумай тар тăкма тивнĕ унăн.

Ак хайхи, виçĕ хутлă капмар çурт хăпартса та лартнă. Иртен-çӳрен пăхса ăмсантăр, кӳршĕсем тĕлĕнччĕр: Савельевăнни пек хӳхĕм кермен таврара та çук!

«Дача амнистийĕ» текен акци вĕçленсе пырать тени ун хăлхине кĕнĕ те Росреестрăн Чăваш Республикинчи управленине тăнкăлтаттарнă çак йăрă этем. Амнисти пынă чухне харпăрлăх хучĕсене укçасăрах хатĕрлесе параççĕ-çке.

– Сирĕн çурт 1400 тăваткал метр лаптăк йышăнать-и? – пĕççисене шарт çапнă кантур ĕçченĕсем. – Ача сачĕ е клуб уçма шут тытрăн-им?

– Хе-хе, – шăл йĕрнĕ Савельев. – Хам валли купаларăм-ха, мул хуçисем çеç чаплă коттеджсенче рехетленсе пурăнмалла-и? Эпир мĕнрен кая?

Росреестр çыннисем ун çуртне кайса курас тенĕ. Пăхсах курăнать, Савельев ăна пĕр-пĕр офис е хăна çурчĕ валли купаланă.

– Пуянраххисен çурчĕсен лаптăкĕ 200-400 тăваткал метрпа танлашаканччĕ, ку вара тăватăпилĕк хут пысăкрах, – тет управлени пуçлăхĕн çумĕ Татьяна Васильева. – Харпăрлăх хучĕсене улталвпа илме пикеннĕ тĕслĕх пайтах. Пĕри 5 хутлă çурта вăл 3 хутлă çеç теме пăхрĕ. Çавнашкал ĕçсене прокуратура хак парĕ.

**Григорий СЛАВИН**



# Кĕвĕçни ырă тумасть

Тути çинче амăшĕн сĕчĕ те типмен темелле 16 çулти йĕкĕте. Шел, çамрăклах алли кукăрălнă. Ют пурлăха хапсăннипе кĕске хушăра виçĕ хут йĕрке хуралçисен аллине лекме пултарнă вăл. Çитменнине яланах хăйĕн вĕрентекенне шар кăтартнă çамрăк. Мĕнпе айăпа кĕнĕ-ха педагог? Ахăртнех, вăл пысăк шалу илсе тăни канăç паман. Кĕвĕçтернĕ.

Пĕрремĕш хут вăл сунара кăçалхи май уйăхĕнче тухнă. Хуçисем килте пулманнипе усă курса çурта кĕрсе 40 пин тенкĕ йăкăртнă. Йĕрке хуралçисем вăрра çийĕнчех тупса палăртнă-ха, анчах лешĕ янтă укçана пĕтерме те ĕлкĕрнĕ. Алла укçа лексенех мопед туянса янă. Район сучĕ ăна 2 çуллăх условлă майпа ирĕкрен хăтарнă.

Лăпланма, ăса кĕме вăхăт темелле. Ăçта унта, янттине пĕр хăнăхсан чарăнма йывăр çав. Августра каччă çак çуртранах 18 пин тенкĕ вăрланă. Уголовлă ĕçе судра пăхса тухса ĕлкĕреймен, октябрьте вăрă каллех хăнăхнă çулпа вăрттăн сунара тухнă. Педагог ĕçе тухса кайсанах çăра çĕмĕрсе пӳрте кĕнĕ те 12 пин тенкĕ кĕсйине пĕтĕрсе чикнĕ. Анчах каллех çакланнă. Хальхинче айăплав татах çирĕпрех пулĕ.

# Улталвçă тухтăр

Юлашки вăхăтра тухтăрсен шалăвне палăрмаллах хăпартрĕç темелле. Анчах хăшĕпĕри намăс-симĕсе мансах шурă халатне взяткăпа варалать.

Çак кунсенче Çĕмĕрлери район сучĕ медицина ĕçченĕ тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе пăхса тухнă. Хальхинче капкăна Пăрачкав район тĕп больницинче вăй хунă тухтăр çакланнă. Кăçалхи май-июнь уйăхĕсенче тухтăр виçĕ çынна тĕпчев ирттермесĕрех чир-чĕр çуккине çирĕплетекен хут тыттарнă. Ырă кăмăллă тухтăра лешĕсем апат-çимĕç, эрех тата укçан парса тав тунă. Ултав ури кĕске: шурă халатлине алăранах ярса тытнă. Çĕмĕрле район сучĕ ăна 30 пин тенкĕлĕх штрафланă. Сывлăх сыхлавĕн учрежденийĕнче те 4 çул явапла вырăн йышăнаймĕ.



**П. АЛА**

# Тĕнчери чи лайăх асатте

– Семен Кузьмич тĕнчери чи лайăх асатте.

– Эс ăçтан пĕлетĕн?

– Хам куртăм. Унăн хĕрĕпе кĕрӳшĕ тата ачисем кăнтăра канма кайнă. Семен Кузьмич валли парне илсе килнĕ. Футболка. Ун çине пысăк саспаллисемпе «Самый лучший в мире дед» тесе çырса хунă.

**И.ЧУРАЛЬ**



**– Йытă хĕрарăмран ăслăрах – хуçине вĕрмест.**

– Собака умнее женщины – на хозяина не лает.

**Н. Никифоров ӳкерчĕкĕ**

# Спектакль хыççăн

Пĕррехинче, раштав сиввинче, эпир ялти клубра кулăшла спектакль лартнăччĕ. Улатимĕр Тули милиционер рольне вылянăччĕ.

– Леш айккинче сăмакун юхтаракансем пур тет. Атя кайса хăрататпăр çавсене, – терĕ Матви тусăм спектакль хыççăн.

Милици тумне хывмасăрах тепĕр урамалла утрăмăр. Ушкăнпах.

Яла милици килнĕ текен хыпар хăвăрт сарăлнă. Сăмакун юхтарма хатĕрленекенсем çавна илтсен йӳçсе çаврăннă пăракине хуранĕ-мĕнĕпех валашкана силленĕ тет. Юхтарма ĕлкĕреймен çав.

Кайран пĕр ушкăн ĕне-сурăх урам тăрăх ĕрĕхтерсе çӳреме пуçланă. Ял-йышран пытарма çук. Камсен выльăхĕсем ӳсĕрĕлнĕ, çавсем сăмакун юхтарни палăрнă вара. Çапла вара «артистсем» сăмакунçăсене тăрă шыв çине кăларнă.

**А. АНИШОВ, Сĕнтĕрвăрри районĕ**



**Лидия САРИНЕ**

# Чăх телейĕ

– Ых, сивĕ. Ура шăнать. Кашта çине ларас пуль, – тет сарă чăх.

– Сивĕ çав, сивĕ. Хĕл çитрĕ, – теççĕ кӳршĕ чăххисем те.

– Эпĕ çăмарта тума пăрахрăм, – тет пĕри.

– Эпĕ те.

– Эй, сарă тулли лекмест-çке, – кăлтăртатаççĕ ыттисем.

– Лекмест çав. Сайра-хутра çеç сапса параççĕ. Ĕлĕк апла пулман теççĕ. Тулă нумай пулнă тет. Кирек темĕн чухлĕ çи.

– Мĕн тăвас тетĕн. Пирĕн шăпа çавнашкал ĕнтĕ.

– Сирĕн автан пурăнать-и хăть?

– Çӳретчĕ-ха кикириккине силлентерсе.

– Пирĕн те мухтанма юрататать. Каска çине хăпарса каять те, эй, сухăрашать. Пĕтĕм чăхсене хăй тавра пуçтарать.

– Ав, хăй килет. Ан шарлăр.

Автан пăшăлккă чăхсене савăнтарма шутлать.

– Эй, чăхсем, кĕçех Çĕнĕ çул та персе çитет акă. Вăт уяв пулать.

– Эпир те Çĕнĕ çул уявлăпăр-и?

– Паллах.

– Мĕнле?

– Кил хуçисем уявра сарă тулла хĕрхенмеççĕ. Уяв пире валли те çитĕ, тусăмăрсем. Ан кулянăр! Çитĕ.

– Эй, – хĕпĕртеççĕ чăхсем. – Сарă тулă çитерсен Çĕнĕ çул кaçĕ кашниех пĕрер çăмарта туса парăпăр. Кил хуçисене савăнтарăпăр.

## Уҫăлса ҫӳрени



Асламăшĕпе мăнукĕ уҫăлма тухнă. Хĕр пĕрчине тутлă шывпа хăналас тĕллевпе ватă хĕрарăм киоск умĕнче чарăнса тăрать. Хайхискер мăнукĕ валли – «тутли», хăйне валли «йӳҫҫи» туянать. Ватăскерне нумай кирлĕ-и – ӳсĕрĕлсех каять.

– Асанне, иксĕмĕр урамра аван ҫӳрерĕмĕр, атя киле, – ҫавăтса каять ăна пиллĕкри хĕрача.

## Тăватă хĕрĕн – тăватă ăс

Тăватă хĕр курортран таврăннă.

– Акă киле ҫитетĕп те кампа-кампа ҫӳренине йăлтах упăшкана каласа паратăп, – тенĕ пĕри.

– Ухмах та иккен эсĕ, – ятланă ăна тепри.

– Мĕн тери хăюллă эсĕ, – мухтанă виҫҫĕмĕшĕ.

– Мĕнле пурне те астуса юлма пултарнă-ха эсĕ, – тĕлĕннĕ тăваттăмĕшĕ.




Виҫĕ ҫынна – пĕр пулă

МУЖСКАЯ РАДОСТЬ
Вобла на троих

## Ăнлантару

Пĕр ĕҫкĕҫ пилĕк кун ĕҫе тухман. Улттăмĕш кунне пуҫлăх ăна хăй патне чĕнтернĕ те ăнлантару ҫырма хушнă.

«Тунтикунран ҫĕнĕ пурнăҫ пуҫлас тенĕччĕ. Пачах ĕҫме пăрахасшăнччĕ. Анчах юлташсемпе кивĕ пурнăҫ историне аса илме пуҫларăмăр та – вĕҫертмерĕҫ. Пилĕк кунран аран-аран хăтăлса тухрăм», – ҫапла ҫырса панă лешĕ.



## Ҫырлаху

Шел, сана качча илмен –
Эс пурри ҫинчен пĕлмен.
Халь ку – ĕмĕрлĕх инкек,
Ҫамрăклăх килеймĕ тек.
Эсĕ пур – ҫаплах хитре,
Пирĕшти пек сăн-питре
Ăшă куллуна куратăп,
Ҫур сăмах хушма хăратăп.
Ĕмĕтри ман юрату –
Сипленейми ырату.
Каласассăн тӳррипе.
Халĕ эсĕ пуррипе,
Хушăран тĕл пулнипе
Ҫырлахма кăна тивет –
Тунсăхне шăпа тиет.

**Анатолий ЮМАН**




**Сăмахсăрах.** Без слов.

# Намăс-симĕс куçа кĕмест

Виç хĕрарăм пĕр пасар тенĕ. Коридор вĕçне пухăннă хĕрарăмсем хĕрсех тем пакăлтатнине кура вĕсем патне пытăм. Ак хайхи, тахçан, вунтăватă-вунпилĕк çул каялла, редакцире пĕрле ĕçленĕ хĕрарăм тăра парать. Пач та улшăнман: ыраш улăм пек саратнă çÿçне кăкăрĕ умне янă, тутине хĕп-хĕрлĕ писевпе сăрланă. Сăн-пичĕ çуталса-ялкăшса тăрать. Хулпуççи çине уртса янă кĕрен тĕслĕ сарлака пурçăн шарфĕ тата мĕнлерех хÿхĕм.

– Ай-уй, хăçантанпа курман сана, – ыттисенчен хăпса ман ума пырса тăчĕ хайхи. – Пĕлетĕн-и эпĕ халĕ камне?

Хулпуççине сиктернине кура малалла такăртаттарма тытăнчĕ.

– Астăватăн-и, сывлăхпа çыхăннă материалсем мана еплерех кăсăклантарнине. Ун чухнех çынсене сиплес килетчĕ. Виçĕ çул каялла ятарласа психологипе çыхăннă курс пĕтертĕм. Халĕ эпĕ те сыватма пултаратăп. Алă хăвачĕпе.

Унччен пĕрле ĕçленĕ хĕрарăм çине ним калама пĕлмесĕр пăхса тăратăп.

– Акă, ĕненместĕн пулсан кăтартма та пултаратăп, – тет хайхи ман хыçа тăрса. Аллисемпе ÿте çупăрланăн кĕлеткене перĕнтермесĕрех çÿлтен аялалла, аялтан çÿлелле куçарма пуçлать. Унтан вĕсене вĕçсе каясла сарать:

– Курса тăр, уçă варкăш килме пуçлать.

Аллисене çунат пек сарнăскер чăннипех те сывлăш хăвалама пуçлать. Пурçăн шарфĕ хумханса çеç тăрать.

Хăйне мухта-мухта, нумай çынна пулăшнине кала-кала «сиплет» тахçантанпах курман ĕçтешĕм. Хамăн вара кулас та, тарăхас та килет. Анчах иккĕмĕш туйăмĕ вăйлăрах. Кунашкал камите текех чăтса тăма хал çитменрен ĕç нумаййине персе пăрăнса утрăм. Чун пушанса юлчĕ. Вăтанман юмăç пулнă теççĕ. Улталанас тата улталаттарас текенсем пуррипе иртĕхеççĕ ахăртнех.



Редакцие килнĕ çырăвне илетĕп. «Пичете валли мар ку. Чуна уçса калани çеç, – тесе çырать пĕр вулакан. – Чун ыратăвне калам. Хаçатри рекламăпа пĕлтерÿсен серепине лекнĕ хыççăн вĕсене курайми пулса çитрĕм. «Пăскăнчăка сиретĕп, пурнăçри мĕнпур йывăрлăхран хăтаратăп» текен çын мăшăрăм çĕре кĕричченех укçа сăптăрса пурăнчĕ. Вăл чăн-чăн шарлаттан пулнине арăм ĕмĕрлĕхех куçне хупсан çеç тавçăрса илтĕм. Шел, питĕ кая юлса ăнлантăм çакна».

Республикăри Шалти ĕçсен министерстви те чан çапать, çынсене асăрхануллăрах пулма сĕнет. Мускав ултавçисем радио урлă хайсен çук таварне рекламăласа вун-вун çынна шăнман пăр çине лартнă иккен. Шар куракансем – ват çынсем. Нумаях пулмасть радиошулĕксен танатине Шупашкарта пурăнакан 75 çулти пенсионер та лекнĕ. Тĕлĕнтермĕш куçлăх илме ĕмĕтленсе хайхискер ултавçăсен счечĕ çине 90 пин тенкĕ ытла куçарнă. Куç çивĕчлĕхне пĕр самантрах ÿстерекен чаплă аппарат çинчен радиопа илтсен хĕрарăм «хĕрÿ лини» телефонĕпе шăнкăравланă. Пирвайхи 10 пин тенке вăл Мускавра регистрациленнĕ уйрăм çын счечĕ çине куçарнă. Çакăн хыççăн ултав çăмхи калама çук пысăк хăвăртлăхпа чăмăртанма пуçланă. Медицина таварĕсемпе тивĕçтерекен компани менеджерĕсем ват хĕрарăма мĕнпур чиртен сыватма диагностика тумаллине пĕлтернĕ. Çÿç пайăркипе чĕрне вĕçне ярса пама ыйтнă. Пенсионер вĕсен хушăвне пионерла тĕп-тĕрĕс пурнăçласа пынă. Мĕн чухлĕ ыйтнă – çавăн чухлĕ укçа куçарса тăнă. Хăйне тирпейлесе пытарма тесе пухса пынă укçи пĕтсен банка кайса кредит илнĕ. Паллах, нимĕнле тĕлĕнтермĕш куçлăхпа та тивĕçтермен ăна. Ултавçăсем çĕр çăтнăн çухалнă. Ват хĕрарăм халĕ полицирен пулăшу ыйтать. Анчах çак пăтравлă ĕçĕн вĕçне-хĕрне тухасси питĕ иккĕленÿллĕ.

Мĕн каласшăн: çăмăллăнах укçа тума май пурри, тар юхтармасăрах тутлă çиме, чаплă тумланма пултарасси хăшне-пĕрне çынлăхран кăларать. Намăс-симĕс куçа кĕменнине кура, хăйсен серепине лекес текенсем тупăнсах тăнипе хавхаланса çине тăрсах «ĕçлеççĕ» вĕсем. Шарфпа та хум яраççĕ, пĕлтерÿсем те параççĕ, радиопа та калаçаççĕ... Çил вĕçтернĕшĕн те укçа тÿлекенсем пур чух мĕншĕн айкашас мар теççĕ пулас.

**Елена НИКОЛАЕВА**

# Йышăннă

Пĕр çамрăк арçын пыр шыçнипе аптăранă. Сассине çухатнăскер пăшăлтатса çеç калаçнă. Кŷршĕрех тухтăр, ачалăхри тусĕ, пурăннине аса илнĕ те ун патне эмел çыртарма кайнă.

Шăнкăрав пускăчне пуснă та тухтăр арăмĕ алăк уçнă.

– Ванюш килте-и? – ыйтнă килнĕ çын пăшăлтатса.

– Çук, кĕме пултаратăн, – тенĕ лешĕ те пăшăлтатса.




# Тĕлĕнтермĕш машина

Пĕр çын çулпа утса пынă. Çилтăман çула хŷсе кайнăран утма йывăр. «Эх, ăçта-ши пĕр-пĕр такси?» – ĕмĕтленнĕ вăл. Кĕтмен çĕртен умрах çăмăл машина тăнине асăрханă. Вăт телей! Çывхарнă. Машина çывăхĕнче никам та курăнман. Алăкĕ те çăмăллăнах уçăлнă. Питĕрмен. Çŷревçĕ хыçалти ларкăч çине кĕрсе ларнă та хуçи килессе кĕтнĕ.

Сасартăк машина вырăнтан хускалнă. Мĕн ку? Çул тăрăх хăй тĕллĕнех каять. Шоферсăрах. «Тĕлĕнтермĕш машина тĕлнех пултăм», – савăннă çын. Кайсан-кайсан ял пуçне пырса чарăннă. Çитес çĕре юмахри пек çитнĕшĕн пассажир питĕ савăннă, салонран тухнă.

– Кам эсĕ? – чарнă ăна тĕреклĕ йĕкĕт.

– Ну, ларса килтĕм хăй тĕллĕн çŷрекен транспортпа, – тенĕ лешĕ нимĕн калама пĕлмесĕр.

– Ах, йĕксĕк! Эпĕ тĕкетĕп, эсĕ ларса çŷретĕн, – чăмăрĕпе юнанă машина хуçи.

**Н.СУЙМАНОВ**

# Ресторанта

Пĕр чиперкке ресторана кĕнĕ те сĕтел хушшине ларнă. Официант ун патне пырса меню хурса панă.

– Паллашăр. Мĕн астивесшĕн-ха, чиперкке? Коньяк, шурă эрех, сăра... Хăшне килсе памалла? – ыйтнă вăл.

– Кăмăлласкерĕм, шăпах эсир халĕ асăннă йĕркепе ĕçме пуçласшăн-ха. Çĕклесе килĕр пĕрерĕн, – хушнă лешĕ.




# Пĕрреллĕхе каçарнă

Инспектор айăпа кĕнĕ машинăна чарнă.

– Штраф – пин тенкĕ, – пĕлтернĕ водителе.

Руль умĕнче хăйне шкулта вĕрентнĕ учительница ларнине курнă та хушса хунă:

– Каçарăр, Мариванна! Эпĕ сире пĕрреллĕхе каçаратăп. Малашне ман куçăм тĕлне пуласран асăрханăр.

Любовь ФЕДОРОВА



# Эх, купăста, купăста, сана çиме эп ăста!



*Такмаксем*

Юман вутти хутнăран
Пуçа тиврĕ мунчара.
Çирĕм ешĕл купăста –
Сĕрĕм сирĕлчĕ таçта.

Манăн чун савнин хăлхи
Купăста çулçи пекех:
Мĕне кирлĕ вăл илтни –
Урлă вăл, локатор пек.

Кучченеçлĕх купăста
Кирлĕ пирĕн кил-çурта.
Килтĕн тĕк актив ăна:
Каротин нумай унта.

Нӳхрепре те купăста,
Çенĕкре те купăста,
Купăста – сĕтел çинче,
Вăл пулсан пĕтместь тĕнче.

Купăста кукли пиçет,
Тутлă,техĕмлĕ вăл, шеп.
Пĕр çавна пула кăна
Ман пата килет хăна.

Купăста туранă чух
Касрăм ятсăр пӳрнене.
Манăн мăшăр халь те çук,
Шантăм Турă çырнине.

Купăстана йӳçĕтме
Кирлĕ-ши нумай тăвар?
Савни мана кĕвĕçет,
Юратмастăн – уйрăлар.

Купăста кавленĕ чух
Янах шăмми пăрăнчĕ.
Çăварта пĕр шăл та çук,
Старик манпах пурăнчĕ.

Мулкачпала качакан
Ăрасналăх пач та çук.
Мĕн кăшлать купăстана?
Каçăр пуç та Чалăш Куç.

Шурă купăста пулать,
Симĕс купăста пулать.
Аякри савни ман çук,
Йăпанас кампа ку чух?

Купăста халь модăра:
Юрăра та одăра,
Унсăр çырăнмасть сонет,
Çуралаймасть чăн-чăн поэт.

Купăста çинчен роман
Çырчĕ харсăр Ăраман.
Хăй лартса курман анчах
Купăста калчи пачах.

Купăста йыт çӳппи мар,
Йӳнĕ те мар, хаклă мар,
Чыслă – ӳстерекенни,
Сывлăхлă – çиекенни.

Купăста вăл – ку «пăс» та,
Пăсланать-ши? Чим, тăхта,
Йăкăртатаççĕ ун пуçне,
Хакламаççĕ çын ĕçне.

Купăста каса-каса
Сылтăм ура ыратать.
Старик çӳрет йăрккаса,
Те çавнашкал юратать.

Каçăр пуçлă качака
Купăсташăн касăхать.
Пырĕ ман савнин яка:
Мĕн тутлишĕн антăхать.

Купăста шыв сапнăран
Хăвăрт çавăрчĕ пуçне,
Чун савнийĕм сыпнăран
Хупрĕ вăхăтсăр куçне.

Ирхине те купăста,
Каçхине те купăста.
Кăнтăрла вара – кăшман,
Пирĕн çук килте тăшман.

Ман савнипе сан савнин
Çӳçĕ хумлă кăтрашка.
Купăстан пурах усси –
Çийĕр пĕрешкел яшка.

Купăстапа купăста
Хăçан пултăр пĕрешкел?
Эпĕ айван, эс ăста –
Майрака та хӳрешке.

Кăчăрт! Кăчăрт! тутарса
Савни купăста çиет.
Кайăттăм унран тарса –
Тепĕр айванкки çитет.

Пин хут кĕпе тăхăнса
Тĕлĕнтерес тетĕн-им?
Купăста пур сан пекки,
Çаврака кĕлеткелли.

Шӳт-такмак ăсталама
Çирĕм шурă купăста:
Вăл вăй пачĕ хайлама,
Çыраймасан намăс та.

**– Сӑмакун валли сахӑр пухаймасть те хӑйӗнпе хӑй йӑпанать....**

– Сахара для самогона не может достать. Вот и занимается аутотренингом.






**– Ӑнланаймастӑп... Мӗн тупнӑ вӗсем ҫак картинӑра?**

– Не пойму... Что они нашли в этой картине?




– Мы все колхозные деньги вложили в эту дорогу, зато теперь с продуктами нет проблем: через полчаса – в городе.




– Больше килограмма не дам: очень вредна для здоровья!




– И для кого ты все морду красишь? Ведь у нас искусственное осеменение!

Г. Огородников ӳкерчӗкӗсем

## Тĕнче кĕрÿшĕ

Кÿршĕри ватă çынна Кĕркури мучи тесе чĕнетпĕр. Çурăм хыçĕнче ăна «тĕнче кĕрÿшĕ» текелеççĕ. Çамрăкла питĕ шухă пулнă-мĕн, çичĕ арăма çитернĕ. Малтанхи арăмне висĕ ачипе килтен хÿтĕрсе янă та çирĕм çулти хĕре илсе пынă. Пилĕк çул пурăннă хыççăн çамрăк арăм хăй урăх арçынпа ялтан тухса тарнă. Мучи тата темиçе хут авланнă, киле кĕрсе те пăхнă. Анчах пурнăçĕ ăнман. Юлашкинчен Кĕркури малтанхи арăмне таврăнма тархасланă. Вăл, хĕрĕ патĕнче пурăнаканскер, Кĕркурипе калаçасшăн та пулман. Ачисем те мучи патне килсе çÿремеççĕ. Çичĕ арăма çитнĕ пулсан та ачисем малтанхинчен кăна.

Пурăнать халь мучи тăлăх туратăн тунсăхласа. Пач пĕчченрен пĕр автанпа висĕ чăх усрать. Автанĕ хăй пекех ватă.

Тĕрĕссипе, Кĕркури мучи пĕрре те усал çын мар. Тен, çавăнпа хĕрхенеççĕ ăна кÿршĕ хĕрарăмĕсем. Пĕри кĕпи-йĕмне çуса парать, тепри – урайне. Эпир хăш чухне сĕт-турăх леçсе паратпăр.

Пĕррехинче анне ватă çынна кукăль кайса çитерме хушрĕ. Мучи эпĕ кил картине кĕнине асăрхамарĕ. Калаçа-калаçах чăххисене тăрантарать, автанне ăс парать:

– Лăплан-ха, Петя, лăплан! – тет мучи автанне. – Эсĕ вĕсене пур пĕрех парăнтарас çук. Иксĕмĕр те ватăлтăмăр ĕнтĕ. Ĕлĕк кÿршĕ чăххисем пирĕн пата килетчĕç, халĕ вара килтисем кÿрше тараççĕ. Мĕн тăвăн, çапла вăл ватăлсан...

**Роза ВОЛКОВА.**
**Вăрнар районĕ, Калинино сали**




## Ырăсла пĕлменни

Пĕррехинче «Ялав» журналăн тĕп редакторĕн Юрий Сементерĕн пÿлĕмне шак-шак-шак! шаккаççĕ.

– Мушнĕ? – тет хайхи алăк тулашĕнчи сасă.

– Мушнĕ, мушнĕ, – тет халăх поэчĕ. Пÿлĕме сумлă чăваш ăсчахĕ Василий Димитриев профессор кăштăртатса кĕрет. Хул хушшинче кирпĕч хулăнăш алçыру.

– О-о-о! – тет Юрий Семенович савăнăçлăн, – мĕнле пысăк чыс «Ялав» журнала çакăн пек селĕм парнепе килсе çитни. Эсир, хисеплĕ Василий Димитриевич, чăваш халăхĕн анчах мар, пĕтĕм Раççейĕн, тĕнчен академикĕ. Сире ача садĕнчи шăпăрлансенчен пуçласа шур сухалсем таранах пуç таяççĕ...

– Сементер юлташ, – тет шап-шур çÿçлĕ ăсчах, – эсир – чăн-чăн чăваш шăпчăкĕ, чăваш чĕлхин 17 томлă Ашмарин словарьне пăхмасăр калама пĕлекен пултаруçă. Эпĕ чăваш чĕлхине сирĕн пек анлă пĕлекен, тăван чĕлхепе çепĕç те тĕрĕс калаçакан çынна хам ĕмĕрте кураймарăм-ха...

– Мĕн тăвас тен, Васлей пиччемĕр, кунта сăлтавне ăнланса илме йывăр мар: ĕçĕ пĕтĕмпех эпĕ ырăсла пĕлменнинчен çеç килет, – шÿтлет редактор.

**Исмай ИСЕМПЕК**

## Пĕлеççĕ-ши?

Кирук картишĕнче çÿрет. Хăй çăкăр татăкĕ тытнă. «Ме!» – терĕ ĕнене. Ĕне ун патне пычĕ. «Ме!» – терĕ сурăха. Сурăх та ун патне çывхарчĕ. «Ме!» – терĕ сыснана. Сысна та пычĕ. «Ме!» – терĕ Хураçкана. Хураçка хавасланса ун тăрăх сикме пуçларĕ.

«Пурте «ме» тенине пĕлеççĕ. «Пар» тенине пĕлеççĕ-ши?» – шухăшларĕ вăл. «Пар!» – терĕ ĕнене. Лешĕ пуçне аяккалла пăрчĕ. «Пар!» – терĕ сурăха. Сурăх ун çине ăнланмасăр пăхрĕ. «Пар!» – терĕ сыснана. Сысна илтмĕше печĕ. «Пар!» – терĕ Хураçкана. «Хăр-хам!» – турĕ Хураçка шĕвĕр шăлĕсене кăтартса.

**Николай КАРАЙ**






# Пурри пуршăн кулянать

Викторпа Вениамин, салтак службинче пĕрле пулнăскерсем, туслăха упраççĕ: пĕр-пĕрин патне хăнана çӳрекелеççĕ. Хальхинче, чылай хушă тĕл пулман хыççăн, район центрĕнчи пасарта тĕл пулчĕç...

– Хăçантанпа курман, – ыталаса илчĕ Веня Виктора. – Çĕпĕре тухса кайман-ши теттĕм. Виктор, эсĕ чаплă машина туяннă тенине илтнĕччĕ. Кăтарт-ха урхамахна!

– Веня! Машинине туяннă-ха та, – кăмăлсăррăн пуçне хыçса илчĕ Виктор – çуранах таккама лекрĕ вĕт... Ăнмарĕ мана. Права илес тесе вĕреннĕччĕ те, куçу витĕр мар терĕç, права памарĕç. Ирĕксĕрех Шипунова доверенность пама тиврĕ. Халĕ вăл, тӳррипе каласан, машина хуçи пулса тăчĕ. Машинине хăй патĕнче тытать. Ăçта машинăпа тухса каяссине пĕлсе те юлаймастăп.

Виçĕмкун ăна пасара каясси пирки асăрхаттарнăччĕ. Паян ирхине вăл урăх çĕре вĕçтернĕ.

– Çапла, Веня, «тимĕр урхамаха» кӳршĕ валли туяннă пекех пулса тухрĕ...

– Виктор, атя, кĕрсе ларар-ха кафене, калаçмалли, канашламалли самаях пур... Эпĕ кӳршĕ Çимунпа ларса килнĕ-ха. Çимун лайăх каччă, тен, киле çитиччене ăсатса ярĕ.

Туссем кафене кĕчĕç.

**Рев РУБИН**



– Подушку безопасности забыл!



– Тягач нужен?

П. Козич ӳкерчĕкĕсем

**Валентин КОНСТАНТИНОВ**

# Пĕрремĕш черкке

Пĕррехинче Ваççапа Марье ĕçке кайма пуçтараннă. Капăр тăхăннă Марье Ваççана ăс парать:

– Эсĕ, Ваçça, хăнана çитнĕ-çитменех эрех ан ĕç – ӳсĕрĕлетĕн. Çынсем юрлани-ташланине курса киленме тăрăш.

Çитрĕç хайхисем хăнана. Хĕрарăмсем пĕр кĕтесс вырнаçнă, арçыннисем кайри пӳртре кĕпĕрленнĕ. Сĕтел хушшине ларайман-ха. Кил хуçи четвĕрте аншарли янă та арçынсене сăйласшăн, кил хуçи хĕрарăмĕ хĕрарăмсене сăра стаканĕ сĕнсе çӳрет. Арçынсем кашниех пĕрер черкке ӳпĕнтереççĕ. Ваçça патне черет çитрĕ.

– Çук-ха, эпĕ ĕçместĕп, – тет Ваçça.

Эрех черкки малалла çӳрет.

Темиçе хутчен те çапла пулчĕ. Ваçça пĕрне те ĕçмерĕ.

Сĕтел хушшине те ларчĕç, апат-çимĕçе тутанчĕç, ĕçрĕç те çирĕç. Пурне те эрех-сăрапа сăйлаççĕ. Кил хуçи Ваçça умне çитет те: «Эсĕ пурпĕрех ĕçместĕн-ха», – тесе иртсе каять. Ĕçĕччĕ Ваçça, анчах та сĕнмеççĕ, ыйтсах ĕçме аван мар. Акă юрă-ташă та пуçланчĕ, ĕçкĕ хĕрнĕ çемĕн хĕрсе пычĕ – Ваçça тăп-тăр урă сĕтел кĕтессинче ларчĕ. Ăна никам та асăрхамарĕ.

«Э-э-э, – терĕ Ваçça хăйĕн ăшĕнче. – Кун пек ларса пулмасть, киле утсан авантарах».

Марье самаях хĕрнĕ, ташă ушкăнĕнче тăпăр-тăпăр туса такмак каласа ташлать.

– Киле пуçтарăнма вăхăт, – тет ăна мăшăрĕ.

Тухса утрĕç вара иккĕшĕ. Ваçça малта тăп-тăр урă утса пырать, хыçалта Марье йăпăртатса чупать. Хăй тĕллĕн калаçать хĕрарăм:

– Эх, эсĕ васкасса пĕлнĕ пулсан: «Ваçça, ĕç, Ваçça, ĕç», – тенĕ пулăттăм.

Çапла пулнă хыççăн Ваçça хăнана кайсан черккене çӳле-çӳле çĕклесе тĕппипех ĕçме пуçланă.

Борис БОРЛЕН

# Аптекăра

Аптекăра – хаксем кăра,
Сутма тивмест-ши вăкăра?

***

Хаксем кăра-и? Ан хăра:
Илемĕ – этикеткăра.

***

Чăнах та чĕрĕлес тесен
Туянăр йӳнĕ эмелсем.

***

Аптекăра куç алчăрать,
Илесчĕ – енчĕкĕм чарать.

***

Питех те кирлĕ витаел,
Укçа пухма çитмест мехел.

***

Укçасăр памалли рецепт...
Çук çав пачах та ун хисеп.

***

Аптека тыткăна илет,
Сан кĕсйӳне тытса силлет.

***

Аптекăран тухсан тӳрех
Асилтĕм: курăк йӳнĕрех.

***

Хĕлле, шăнсассăн, чи кирли
Хурлăханпа хăмла çырли.

***

Матрӳшкепе вĕретнĕ чей
Ĕçет те чирлемест мучей.

***

Килте кирлех сухан-ыхра,
Вĕсем пулсан эс – ырлăхра.

***

Кашни кaçах ĕçсессĕн турăх
Вар чирĕпе чирлемĕн урăх.

***

Мунча кĕмешкĕн кирлĕ милĕк,
Вара ыратмĕ санăн пилĕк.

***

Хур çăвĕпе пите сĕрсен
Шартламара та тăм илмен.






– Доктор, что-то я все время падаю.




– Ты желание успел загадать?





# Укçалла туянни çăмăллăх

Вăтă çын укçаллă теççĕ,
Çавăнпа ăна
Темшĕн те тӳлеттереççĕ,
Чăт та тӳс кăна.
Домофон тени пулсассăн
Вăхăтра тӳле.
Кухньăра крансем юхсассăн
Чĕн ăстасене.
Газ пирки тĕрĕслекенĕ
Ытларах илет,
Вăл ыйтать тӳрех çĕр тенкĕ:
– Ĕçĕ йывăр, – тет.
Уйăхра пĕрре электрик
Счетчик тĕрĕслет.
Ал-ура сурсан сиплевçĕ
Кучченеç кĕтет.
Сусăр çынсене укçасăр
Памалла эмел.
Çитмĕл çичĕ хут каймасăр
Илейместĕн, шел.
Ветеран пуян вăл теççĕ,
Çавăнпа ăна
Çăмăллăх пурте сĕнеççĕ
Укçалла кăна.

# ХЫРĂМЛĂ ХĔР

Санькка ывăлĕ Альберт аслă шкултан вĕренсе тухсан хуланах ĕçлеме юлчĕ. Икĕ эрнере пĕрре яла амăшĕ патне кучченеçсемпе килет. Ашшĕне ывăлĕ тахçантан пĕрре тенĕ пек çеç тĕл пулать. Ашшĕ килте тăмасть. Мускав пуянĕсем валли керменсем ăсталать.

Пĕррехинче, канмалли кун амăшĕ патне килсен, тахçанах калас сăмаха текех тăсас мар терĕ пулас.

– Анне! Вĕренсе пĕтертĕм, çулталăк ытла ĕçлетĕп ĕнтĕ. Шалăвĕ пĕчĕк мар, – сăмаха пуçларĕ Альберт, – хваттер пур ман (ашшĕ вĕреннĕ чухнех илсе панăччĕ), авланас пулĕ тетĕп. Шурăпа тахçанах туслă. Хĕрĕ чипер çеç мар, пултаруллă та. Вĕренсе пĕтерчĕ ĕнтĕ, диплом илесси çеç юлчĕ. Хĕрлĕ диплом параççĕ пулас, питĕ аван вĕренчĕ. Сăн-сăпачĕпе те, пĕвĕпе те килĕшÿллĕ хĕр, хамран кăшт çеç пĕчĕкрех. Ĕçлеме ÿркенмест, ялта çуралса ÿссе хĕр пулнă...

– Ывăлăм, вăл юрĕ-ха, тен, васкамах кирлĕ мар, çамрăк вĕт, – хăйĕн шухăшне пĕлтерет амăшĕ. Тус хĕрÿ вĕренсе пĕтерсе ĕçе вырнаçтăр-ха малтан...

– Анне, Шурăн ĕç пирки чăрмав çук. Практикăра пулнă организацире вăл диплом илессе çеç кĕтеççĕ, – хăйĕн сăмахне тăсать ывăлĕ. – Шура та качча тухма васкамасть-ха.

– Икĕ эрнерен аçу таврăнмалла. Шурăна илсе килсен аванччĕ тесе шутлатăп...

– Анне, вăл хăй те пĕрлешиччен сирĕнпе паллашасшăн-ха. Çавăнпа пуçларăм та сăмаха. Икĕ эрнерен пĕрле килетпĕр. Сана килĕшессе шансах тăратăп.

Санькка инкене икĕ эрне питĕ вăрăм пек туйăнчĕ: ара, кин пуласси кама кăсăклантармасть?

Канмалли кун тĕлне ашшĕ те таврăнчĕ. Альбертпа Шура çитиччен вăл лавккана тухрĕ кăна, ывăлĕ пĕр çамрăкпа килсе те кĕчĕ.

Амăшĕ вĕсене хапăл туса йышăнчĕ.

– Саша! Хывăн та çул çинчен тухса çăвăн-ха, – хушрĕ Альберт. Эпĕ те кĕçех тухатăп.

Саша тени хывăнчĕ те тула тухса кайрĕ.

– Ывăлăм! Ывăлăм! Эсĕ качча илес текен хĕр çакă пулчĕ-и?! – тарăхса калаçа пуçларĕ амăшĕ. – Нимĕн хитри те çук кунта, хырăмĕ те мăкăрăлчăк пек туйăнчĕ-ха... Кĕрсенех куç хуралса килчĕ... Хырăмĕ ÿсе пуçланăран авланма васкатăн пулĕ-ха! Кĕтменччĕ, кĕтменччĕ!

– Анне! Анне! Лăплан-ха, мана сăмах парччĕ...

– Аçу таврăнтăр-ха! Сăмах мар, вĕри мунча паратпăр сана! – тарăхса чарăнми калаçать амăшĕ.

– Анне! Анне! Ахалех ан пăлханха. Манпа килни хĕр мар, каччă вĕт, курмастăн-им? Саша, куккăшĕ, Çырма пуçĕнчи Виктор Иванчă патне килет. Эпир Сашăпа пĕрле ĕçлетпĕр те, çула май хăнана кĕме чĕнтĕмçке...

– Ах! Тем те курăн. Ара, эпĕ Шурăпа килессе кĕтнĕ вĕт! – сăмаха тăсать Санькка инке. – Шура, мĕн, килĕшмерĕ-и тата?

– Паян унăн шăпах диплом илме каймалла пулчĕ. Ыран, тен, çитĕ-ха, килме каларăм. Çулне пĕлет. Килмесен çитес шăматкун пĕрле çитĕпĕр, – ăнлантарать ывăлĕ амăшне.

– Эй, Турă! Пĕлнĕ-пĕлмен тем сылăха та кĕрĕн... Ара, халĕ хĕрпе каччăна тĕрех уйăрса илме те çук вĕт, çÿçĕ-пуçĕ те, тумланасси те пĕр пек... Ман пăшăрхану çакăнпах вĕçленсен тем пекехчĕ те...

**Рев. РУБИН**




Д. Бандура ÿкерчĕкĕ




А. Зудин ÿкерчĕкĕ




**Николай КРАСНОВ,**
**(Йĕпреç районĕ) хатĕрленĕ**

1. ... – çур тăлăп, теççĕ (каларăш). 2. Хĕл мучи шăпăрĕ çула шăлать (туп.юмах). 3. Хăй пўртре, çивĕчĕ тулта (туп.юмах). 4. Вăл тăвалла туртать (ват.сăм). 5. ...саплăксăр пулмасть (калараш). 6. Çўлте..., çĕрет çĕлен (ват.сăм). 7. Вите хыçне сўре çакнă (туп.юмах). 8. Кăт-кăтик, хўри вĕçĕ ялав пек (туп.юмах). 9. Вăл кама чышкă, кама çăкăр çитерет. 10. ...çыннăн турти кĕске (ват.сăм). 11. ...çăварĕ пысăк пулать (калараш). 12. ... йытти выçă вилмен (ват.сăм). 13. Пирĕн ĕç – ... пуçне хĕç (калараш). 14. Пĕчĕк мучи мунча тăвать (туп.юмах). 15. ...çулĕ нихçан та такăр мар (ват.сăм). 16. Явсан-явсан ...те вĕçленет (калараш). 17. ...саплăк çине саплăк лартать (ват.сăм). 18. Шалта шўрпе, тулта хура (туп.юмах). 19. Авалхи хĕç-пăшал. 20. ...çын телейĕ чул айĕнче (калараш). 21. Хăй йăвинче... та чăрсăр (ват.сăм). 22. Улма-...па, типĕ пăтă – çупала (калараш). 23. Авалхи савăт-сапа. 24. Асаттен пушшине нимпе те йăтса çапаймăн (туп.юмах).

## Иртнĕ номерте пичетленнĕ капкăнкаçмăш хуравĕсем:

1. Палан. 2. Салам. 3. Сăмах. 4. Çăмах. 5. Чăваш. 6. Кăвар. 7. Тăвар. 8. Тăван. 9. Чашкă. 10. Парад. 11. Канаш. 12. Намăс. 13. Калем. 14. Такан. 15. Алтăр. 16. Илпек. 17. Калăп. 18 Кавăн. 19. Каччă. 20. Лайăх. 21. Кушак. 22. Мунча. 23. Кулач. 24. Пукан.







Журналти ўкерчĕксене www.cartoonbank.ru сайтран илнĕ

**Сăмахсăрах** Без слов



## Култармăш Тултармăш

С. Мягков ўкерчĕкĕ




**– Ку – çарату! Вунă сехетлĕхе вырăн пушатăр!**
– Это ограбление! Десять часов интернета, быстро!

## Балаганчик Барабанчик




– Моей жене не нравится, что я храплю...
– Так от чего вам хотелось бы избавиться – от храпа или от жены?

**С. Петрова ўкерчĕкĕ**

# Хисеплĕ Вулаканăмăр!

Эс пĕлен: «Хыпар» Издательство çурчĕн кунçулĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланчĕ. Вăхăт пире çĕнĕлле пурăнма, çĕнĕлле ĕçлеме хистет. Эпир сан шанчăкна тӳрре кăларма тăрăшăпăр, эс вара пирĕн кăларăмсене, тархасшăн, çырăнсам.

***«Хыпар»: Вулаканăм, пĕр çулпа утар!***

| Кăларăмсем | | Индекс | Почта уйрăмĕсенче | «Чăваш пичет» киоскĕсенче | «Советская Чувашия» киоскĕсенче | Редакцире |
|---|---|---|---|---|---|---|
| Хыпар | | 54800 | 732,66 | 288 | 279 | 144 |
| Хыпар-шăматкун | | 78353 | 304,08 | 150 | 141 | 90 |
| Çамрăксен хаçачĕ | | 54804 | 358,08 | 234 | 231 | 144 |
| Чăваш хĕрарăмĕ | | 11515 | 325,08 | 222 | 213 | 141 |
| Сывлăх | | 11524 | 205,02 | 114 | 111 | 81 |
| Кил-çурт, хушма хуçалăх | | 54806 | 184,04 | 114 | 111 | 81 |
| Хресчен сасси | | 54838 | 376,62 | 168 | 162 | 114 |
| Хресчен сасси–кил | | 43887 | 184,08 | 108 | 105 | 81 |
| Тăван Атăл | | 11529 | 319,08 | 252 | 246 | 198 |
| Капкăн | | 24608 | 185,04 | 150 | 126 | 108 |
| ЛИК | | 83429 | 140,36 | 120 | 120 | 100 |
| Тантăш | | 54802 | 274,08 | 138 | 132 | 90 |
| Самант | | 73208 | 181,02 | 162 | 156 | 120 |
| Тетте | | 73771 | 143,52 | 114 | 111 | 90 |

Хакĕ ирĕклĕ

С.Мягков ӳкерчĕкĕ